Сывă пурнăç йĕрки пирĕнтен кашниншĕн уйрăлми пай пултăр

Çĕр ĕçченĕ, учитель те врач – пĕр йышра кăна писет кулач

Пурнăçра хурапа шурă яланах çивĕч тавлашура пулнă. Анчах кирек хăш тапхăра пăхсассăн та тасалăхпа тăрăшулăхшăн, ĕçченлĕхпе сывă пурнăçшăн, таврăкурăм аталанăвĕшĕн тăрăшакансем çĕнтернĕ, вĕсем сывлăхĕсене упраса хăварса пĕрле ўснĕ тантăшĕсенчен ытларах пурăнма мехел те çитернĕ.

Асаттесемпе асаннесем пурнăç çулĕ çине тимлĕрех пăхни юлашки çулсенче пирĕн вăхăтра пурăнакансене те сывă пурнăç çулĕ çине туртăнма «хăвалать». Муркашсем çапла тăваççĕ те!

Кăна вĕсем иртнĕ шăмат кун, февралĕн 27-мĕшĕнче, Калайкассинчи вăтам шкулта тепĕр хут çирĕплетрĕç. Çак кун кунта хăйсен шăллĕне тата хĕллехи полиатлон енĕпе (йĕлтĕрпе чупасси, пăшалтан тĕл пересси, турник çинче туртăнасси) 80-мĕш çулсенче çамрăклах Чăваш Республикин чемпионĕн ятне тивĕçнĕ хамăрăн ентешĕмĕре Юрий Иванович Федотова чыслама пĕр тăван Федотовсемпе пĕрле район ертўçисем, шкул ачисен, учительсен тата урăх районсенчи шкул командисемпе ытти организацисен спортсменĕсем те хутшăнчĕç. Çак спорт уявĕ 20 çултах спортра пысăк ўсĕм шантарнă, анчах тăванĕсенчен, юлташĕсенчен вăхăтсăр уйрăлса кайнă Юрий Ивановичшăн пысăк парнех пулчĕ тесе шутларĕç спорт уявне пухăннисем. Йĕлтĕр йĕрĕ çине тухнă кашни спортсмен Юрий Федотов чемпион ятне варалас мар тесех малтан мала ыткăнчĕ.

Ăмăрту вырăнĕ те авалхи паттăрпа çыхăннă. Исаппай ойĕ. Исаппай – авалхи паттăр. Аслă ăрусен ятне çĕр çине ўкересрен сыхласа хăварасси кашнин чунĕнче пулчĕ çав кун. Çавăнпах-тăр ăмăтăвăн кашни тапхăрĕ хĕрў кĕрешўре иртрĕ.

Палăртса хăвармалла. Çак кун Ю. Федотов парнисемшĕн ирттернĕ йĕлтĕр эстафетипе пĕрлех йĕлтĕрпе чупассипе шкул ачисен спартакиади те пулчĕ. Чăваш Республикин физкультура, спортпа туризм министрĕ А. Николаев та, район пуçлăхĕ Ю. Иванов та, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В. Данилов та спортсменсемпе юнашар пулни уяв хакне ўстерчĕ кăна. Кунпа пĕрлех Александр Иванович, Валерий Иванович, Михаил Иванович Федотовсем те хăйсем пуçарнă ĕçе тĕрĕс-тĕкел туса пырса ăмăрту шайне чикĕрен кăларса ямарĕç.

Стартсем пуçланчĕç. Малтанах VIP-персонăсем вăй виçрĕç. Хăйсен тĕслĕхĕпе çамрăксене хавхалантарчĕç. Çак ăмăртăва 11-ĕн хутшăнчĕç. Çĕнтерўçĕсен картлашки вара çапларах пулчĕ: арçынсем хушшинче 1-мĕш вырăна Чăваш патшалăх университечĕн преподавателĕ С. Тасаков йышăнчĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Москакассинчи вăтам шкул учителĕ С. Кириллов, виççĕмĕш – Йĕпреç районĕнчи В. Петров. Хĕрарăмсем хушшинче çак вырăнсене Е. Савельева (ЧПУ преподавателĕ), З. Дипломатова (Муркаш район администрацийĕ), И. Осипова (Калайкассинчи вăтам шкул учительници) тивĕçрĕç.

Ăмăрту район тулашĕнче те чылай пĕлтерĕшлĕ пулнине унта 5 районти тата Шупашкарти командăсем хутшăнни çирĕплетсе парать.

Ю.И. Федотова асăнса ирттерекен йĕлтĕрçĕсен республикăри эстафети кăçалхипе 8-мĕш хут иртрĕ.

Шăллĕне алла черкке тытса асăнассинчен иртсе ăна чысласа йĕлтĕр йĕрĕ çине тухнисем çак кун хăйсен сывлăхне татах та çирĕплетни пирки никам та иккĕленмест.

Ăмăрту шайĕ çулсерен ўссе пырать. Акă кăçал йĕлтĕр йĕрĕ çине тăнисен хисепĕ 300 çынран та иртсе кайрĕ. Танлаштарма: пĕлтĕр 200 пулнăччĕ. Ăмăрту питĕ хаваслă та хĕрў пулчĕ. Пурин те хаклă парнесене, дипломсене тивĕçес килчĕ ĕнтĕ. Анчах кашни ăмăртурах чи вăйлисем çĕнтереççĕ. Вĕсем кăçал кил хуçисем пулчĕç. Вăтам ушкăнра та, аслă ушкăнри вĕренекенсем хушшинче те Калайкассинчи шкул ачисен икĕ команди те малти вырăнсене тухма пултарчĕ. Çапла вара куçса çўрекен Пысăк кубок та кăçал 6-мĕш çул кил хуçисенчех юлчĕ.

Уявăн тепĕр пайĕнче ачасем учительсем ăмăртнине кăсăклансах сăнарĕç. Кунта Чăваш патшалăх университечĕн командисене çитекенсем пулмарĕç. Канаш районĕнчен килнĕ преподавательсем иккĕмĕш пулчĕç. Хамăр районти Çатракассинчи вăтам шкул вĕрентекенĕсем хĕрў кĕрешўре виççĕмĕш вырăна тухрĕç.

Чи кĕтнĕ те пăлханулла самант вара парнесем парса чыслани пулчĕ. Кашни çĕнтерўçĕ хăйне тивĕçнĕ парнине ăшшăн çупăрларĕ.

Анатолий БЕЛОВ.

Пирĕн ишекенсем республикăра палăрнă

Чăваш телевиденийĕн парнисене çĕнсе илессипе февралĕн 24-27-мĕшĕсенче республикăра пысăк ăмăрту иртнĕ. Ишекенсем çак палăрăмлă ăмăртăва республикăн пур кĕтесĕсенчен кăна мар, республика тулашĕнчен те пуçтарăннă: вăтăра яхăн команда хутшăннă.

Пирĕн районтан унта В.Д. Герасимов тренер-преподавателĕн икĕ воспитанникĕ – Ирина Григорьева тата Екатерина Авдеева хутшăннă. Ирина уйрăмах ăнăçлă ăмăртнă: 50 метра кроль мелĕпе ишессинче вăл ăмăртăва хутшăннă хĕрсенчен 5-мĕш вырăна тухма пултарнă. Хусан, Нижнекамск, Ульяновск хулисенчен килнĕ ишекенсем хыççăн – Муркаш хĕрĕ. Çапла хăйĕн ўсĕмĕнчисем хушшинче пирĕн Ирина республикăра чи малта: 32,9 çекунт кăтартуран иртекенни пулман. Катя вара аслисен 3-мĕш разрядне пурнăçлама хал çитернĕ.

Шел пулин те, командăпа хутшăнма май килменнине пĕлтерет Виталий Данилович. Ачасем хальлĕхе ишесси те, спортăн ытти тĕсĕсем пекех, кулленхи тренировкăсене сиктермесĕр çўренипе çыхăннине ăнкарсах илеймеççĕ пулас-ха. Тата, пытарма та кирлĕ мар, нумай конкурсăмăртусене чылай чух пĕрисемех хутшăнаççĕ. Апла ашшĕ-амăшĕн те çак ĕçре ачисене кăштах пулăшни ытлашши пулмĕ: пур енĕпе те пĕр пек аталанаймасть вĕт ача та.

Анчах та Муркашра ФСК уçнăранпа ачасене бассейнра ишме май пурри чăнах та аван. Çўлерех асăннă кăтартусем пуррине шута илсен, пушшех те савăнмалла Муркашсен. Кĕске вăхăтрах республикăри ăмăртусенче тивĕçлĕ шая çитме тытăннăçке-ха ишекенсем. Апла пултарулла тренерăн ĕçĕ те куç умĕнчех.

Пирĕн ФСК ятне тата Муркаш ятне малашне ишекенсем те кирлĕ шайра тытса тăма пуçлассине ĕненес килет. Пĕрле тăрăшса ĕçлесен ўсĕмсем ытларах та пулĕç.

Сăн ўкерчĕкре: «Ĕнер ăмăртуран таврăнтăмăр, паян – тренировкăна».

Н. НИКОЛАЕВА.
Автор сăн ўкерчĕкĕ.

«Ку ăмăрту – ыттисемшĕн тĕслĕх», –

терĕ судья финал вăхăчĕ тухни пирки пĕлтерсен «Муркашри тĕп больница» муниципаллă сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕн тĕп врачĕ тата ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов иртнĕ ăмăртушăн савăнăçне пытармасăр

Юлашки çулсенче çынсем те, предприяти-организацисем те кану саманчĕсене спортпа çыхăнтарса халăхăмăр хушшинче сывă пурнăç йĕркине сарассине мала кăларчĕç. Ыранхи кун пирки çиччĕ виçсе шутласа пăхакан çын çакна хирĕçлемест те. Унран та ытларах, çав мероприятисене активлăрах явăçать, ыттисене хутшăнтарать. Спортра вăр-вар çын вара пурнăçра та тўрех маххă памасть, йывăрлăхсем умĕнче те алă усмасть. Кун хыçĕнче вара экономика аталанăвĕ тăрать. Йăлтах ăнланмалла пек-и? Ăнланмалла! Çак тĕллеве юлашки çулсенче вырăнсенче ытларах та ытларах пурнăçа кĕртме пуçларĕç. Ĕçре ывăннă-ĕшеннĕ çынсем пĕр хирĕçлемесĕрех йĕлтĕр çине тăраççĕ, футболла выляççĕ, волейбол сетки айне тăраççĕ т. ыт. те.

Анчах кирек хăш ĕçĕн те хăйĕн аталанăвĕ пур. Кунсем-çулсем иртнĕ май вăл тĕрекленет, курăмланать, çынсемшĕн çывăхрах пулса тăрать. Темиçе çул каялла «Росгосстрах» компанин Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркашри страхлакан пайĕ волейболла выляссипе хамăр район центрĕнчех республика ăмăртăвĕсене çул уçса пачĕ. Ытти районсенчен, Шупашкартан, кўршĕ регионсенчен командăсем хапăлласах пирĕн тăрăха спортри вăй-хала виçме килеççĕ пулсан, Муркаш чыс-хисепĕ çĕкленнине пĕлтермест-и-ха çакă?

– Сирĕн килĕрсенче телей те хăтлă пурнăç хуçалантăр! Хăвăрăн та, ачăрсен те сывлăх пултăр! Пирĕнпе пĕрле пулсан ыранхи кун та сирĕншĕн телейлĕ пуласса шанатăп, – тесе вĕçлерĕ район çыннисемпе калаçма уйăрнă сăмахне «Росгосстрах» компанин Муркашри страхлакан пайĕн ертўçи Валерий Иванович Вязов.

Февралĕн 27-мĕшĕнче Çĕршыв хўтĕлевçисен кунне халалласа тата «Росгосстрахăн» куçса çўрекен кубокне çĕнсе илессипе тăваттăмĕш хут турнир иртрĕ.

Палăртма кăмăллă, тин кăна йăлана кĕрсе пыракан турнира хăнасем ытларах та ытларах килме пуçларĕç. Муркаша каймалла тесен пăрăнса юлакансем çукрах пулас çав. Акă страховщиксен кăçалхи турнирне те республикăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен 17 команда килсе çитрĕ. Вĕсемпе пĕрле Туçи Çармăс командине курма май килни районта ирттернĕ ăмăртăвăн статусĕ ўссе пынине кăтартать.

– «Росгосстрах» спорта аталантарас тата унăн витĕмне ўстерес ĕçре яланах активлисен шутĕнче пулнă, пур, пулĕ те. Спорт вăл – наци сывлăхне кăтартакан тĕп кăтарту. Сывă çын çеç тухăçлă ĕçлеме пултарĕ, нацпроектсене пурнăça кĕртес ĕçре шурă тунката пек айккинче юлмĕ, – терĕ филиал директорĕ А. Пирожков ăмăрту пуçланнă май кашнинех ырă ăнăçу сунса. Алексей Геннадьевич «Росгосстрах» волейболпа кăна лăпланса лармасса, çывăх çулсенчех çынсем ытти спорт тĕсĕсемпе палăрасса, вĕсене «Росгосстрах» кубокĕсемшĕн ирттерме пуçласса шанать.

Черетлĕ вăйă: пĕри – пуриншĕн, пурте – пĕриншĕн.

– Паянхи куна «Росгосстрах» Раççейри страховани рынокĕн лидерĕ шутланса тăрать. Ăна вĕсем вуншар çулхи кулленхи тăрăшуллă ĕçпе çĕнсе илнĕ. Ўсĕмсене алăран вĕçертмесĕр татах нумай çул халăхпа юнашар пулмалла пултăр. Хăвăр ĕçĕрпе кăна эсир хăвăр шанчăклă пулнине кăтартатăр, – терĕ ăмăртăва ăнăçу пиллесе район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов.

Çак кунхи ăмăрту, командăсем йышлине кура, тăватă спортзалта – «Сывлăх» ФСКра, Спорт çуртĕнче, Муркашри тата Орининти вăтам шкулсен спорт залĕсенче – иртрĕ. Кашни вăйă умĕн вылянисенчен хĕрўрех пулчĕ. Анчах темĕн тусан та çĕнтерĕве икĕ-виçĕ пая пайлаймастăн. Çапла вара турнир финалĕнче «Моргауш-райбыт» командăпа Çĕнĕ Шупашкарти страховщиксем тĕл пулчĕç. Хĕрў кĕрешўре Муркашсем ăстарах пулни палăрчĕ. Пăхăр медальшăн Шупашкарти ОМОНовецсемпе Муркашри страхователсен команди тĕл пулчĕ. Ку вăйăра та кил хуçисем маттуртарах пулни курăнчĕ.

А. ПЕТРОВ.

Автор сăн ўкерчĕкĕсем.

Муркашсем – Раççей командинче

Вера Соколова, Нина Охотникова, Петр Трофимов – паллă спортсменсем, Муркашри В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕн воспитанникĕсем – иртнĕ кунсенче Сочи хулинче Раççейри хăвăрт утакансен ăмăртăвĕнче Чăваш Республикин чысне хўтĕленĕ.

Хĕрарăмсем хушшинче Вера Соколова иккĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Юниорсен ретĕнче вăй виçнĕ Нина та кĕмĕл медале тивĕçнĕ. Петр Трофимов вара пăхăр медаль призерĕ пулса тăнă. Вĕсене виççĕшне те кăçалхи май уйăхĕнче Мексикăра иртекен Тĕнче чемпионатне хутшăнма Раççей çĕршывĕн пĕрлештернĕ командине кĕртнĕ.

Çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ăмăрту хыççăнах, февралĕн 23-24-мĕшĕсенче, Чăваш патшалăх педагогика университечĕн студенчĕ Петр Трофимов Волгоградра иртнĕ Раççейри студентсен ăмăртăвне хутшăннă. Унта 5 километрлă дистанцире хастар спортсмена çитекенни пулман. Университет команди вара пĕтĕмĕшле зачетсен кăтартăвĕсемпе иккĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ.

Велотрасса çинче

Чăваш Республикинче велосипед спорчĕ вăй илсех пырать. Акă февраль уйăхĕн вĕçĕнче спортăн çак тĕсĕпе республикăн хĕллехи ăмăртăвĕ иртнĕ. Старта пурĕ 119-ăн хутшăннă. Муркашри В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕн тренер-преподавателĕ И. Воробьев ертсе пынипе пирĕн спортсменсем те унта активлă хутшăннă.

Юниорсем хушшинче ăмăртнă Людмила Филиппова (1992-1993 çулсенче çуралнисен ушкăнĕнче) çĕнтерўçĕ пулса тăнă. Аслă ўсĕмри хĕрсем хушшинче (1994-1995 çулсенче çуралнисем) Ирина Портнова кĕмĕл медаль çĕнсе илме пултарнă. Надежда Антонова Анастасия Тимофеевана 9 çеккунт выляса ярса финиша 4-мĕш çитнĕ. 1996-1997 çулсенче çуралнисен ўсĕмĕнче Светлана Данилова иккĕмĕш пулнă. 1998 çулта çуралнисем тата кĕçĕнреххисем хушшинче Вероника Замкована çитекенни пулман.

Çамрăк спортсменсене малашне те ăнăçусем сунатпăр.

Хамăр инф.

А.А. Быкова халалласа

Спортпа туслă пулни сывлăхшăн усăллă пулнине Çатракасси ял тăрăхĕнче, кунти шкулта яланах асра тытаççĕ. Çавна май вăтам шкул йĕркеленипе ăмăртусем тăтăшах иртеççĕ. Акă мартăн 7-мĕшĕнче те черетлĕ ăмăрту ирттерме палăртатпăр. Ку вăл – ялсенчи шкулсем хушшинчи район спартакиади. Унта организацисемпе предприятисен командисем те хутшăнаççĕ. Ку ăмăртăва пирĕн ентеше, Мухтав орденĕн тулли кавалерне Александр Артемьевич Быкова халалласа йĕркелетпĕр.

Спортсменсем йĕлтĕрпе чупассипе, шашкăлла тата шахматла выляссипе, сĕтел çи теннисла, волейболла выляссипе вăй виçĕç.

Л. НИКИТИНА,
Çатракассинчи вăтам шкул директорĕн воспитани парас енĕпе ĕçлекен çумĕ.